25-мĕш ҫул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943 ЯНВАРЬ 29 ЭРНЕКУН 22(6259) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАҪАЧĔ

ЮЛАШКИ СЕХЕТРЕ

Пирĕн войскăсем Касторное хулине йышăнса илнĕ

Январĕн 28-мĕшĕнче пирĕн войскăсем татăклăн атака тунă хыççăн КАСТОРНОЕ хулипе пысăк чугунçул узелне тытса илнĕ. Трофейăсем тытса илнĕ тата тыткăна илнисем пур.

Совинформбюро.

Пурте йĕлтĕр ҫине!

Тепĕр икĕ эрнерен комсомолецсемпе профсоюзсен йĕлтĕрлĕ кросĕ пуҫланать. Хĕрлĕ Ҫар XXV ҫул тултарнă ятпа иртекен ҫак кроса халăх нихăҫанхинчен те лайăхрах иртермелле.

Вырăс халăхĕн аслă полководецĕ Кутузов, пирĕн асаттесене чĕнсе, ҫапла каланă: «Хĕл ситет, ҫил-тăмансемпе сивĕсем пуҫланаççĕ. Ҫурçĕр ачисем, эсир вĕсенчен нихăҫан та хăраман. Сирĕн тивĕç-и? Сирĕн тивĕç — пĕр кăкăрăрсем сивĕ ҫанталăкран та, тăшман хаярлăхĕнчен те хăрамаççĕ — вĕсем тăван ҫĕршывăн шанчăклă стенийĕсем пулса тăраççĕ, вĕсем пурне те ҫĕнтереççĕ».

Аслă полководецăн ҫулăмлă сăмахĕсем халĕ те чĕрĕ.

Комсомолецсемпе профсоюзсен Хĕрлĕ Ҫар XXV ҫул тултарнă ятпа иртекен йĕлтĕрлĕ кросĕ ҫакăн пек задачăсем лартать: ирсĕр тăшмана хĕвеланăҫнелле хăвалакан мухтавлă Хĕрлĕ Ҫар валли йĕлтĕрҫĕ-боецсем ытларах хатĕрлемелле, çамрăк ăрăва çирĕп сывлăхлă, патвар çитĕнтермелле, вĕсене ачаранах тăван çĕршыва хӳтĕлеме хатĕрлемелле.

Комсомолпа профсоюзăн Шупашкар хулинчи хăшпĕр организацийĕсем тата «Буревестник», «Динамо» спорт обществисем кросс пуçланиччен юлнă вăхăтăн кашни сехечĕпе туллин усă курма тăрăшаççĕ, унти çамрăксем кулленех тренировкăллă занятисем ирттереççĕ.

Йĕлтĕрçĕ-боецсем хатĕрлес, йĕлтĕрлĕ кроса хатĕрленес тĕлĕшпе Шупашкар, Шăхасан, Тăвай районĕсенче, Шупашкарти «Медик» спорт обществинче те начар мар ĕçлеççĕ. Калинино районĕнчи «Новая жизнь» колхозри комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем, йĕлтĕрлĕ кроса хатĕрленнĕ май, хăйсем валли кашниех пĕрер мăшăр йĕлтĕр юсаса е çĕнĕрен туса хатĕрленĕ. ВЛКСМ пуçламĕш организацин секретарĕ фронтовик Иванов юлташ ертсе пынипе, унти 45 çамрăк тăтăшах йĕлтĕрлĕ тренировкăсем ирттереççĕ.

Анчах Йĕпреç, Куславкка, Çĕрпӳ, Çĕмĕрле районĕсенче йĕлтĕрçĕ-боецсем хатĕрлеме те, кроса хатĕрленме те тивĕçлипе тытăнман. ВЛКСМ Çĕрпӳ райкомĕн секретарĕ Андреев тата ВЛКСМ Çĕмĕрле райкомĕн секретарĕ: Кощеева юлташсем йĕлтĕр спорчĕн усси çинчен калаçнипех вăхăта иртереççĕ, унти йĕлтĕрçĕсен командисем халĕ те тренировкăллă занятисем иртерме тытăнман. Андреев юлташ районра миçе йĕлтĕр пуррине те шута илмен. Кощеева юлташ йĕлтĕр спорчĕн обществăллă инструкторĕсем хатĕрлесси çине ответсăрла пăхать. Вăл йĕлтĕр спорчĕн инструкторĕсем пулма, 40 сехетлĕ программа тăрăх вĕрентсе хатĕрлемесĕрех, камсем куç умне пулнă — çавсене «çирĕплетсе» хунă. Паллах, унашкал «инструкторсем» çак оборонăллă ĕçе усă кӳреймĕç.

Комсомолпа профсоюзăн Первомайски, Сĕнтĕр, Комсомольски районĕсенчи организацийĕсен работникĕсем «йĕлтĕрçĕсем хатĕрлеме йĕлтĕрсем çук», тесе пурăнаççĕ. Физкультурăпа спорт ĕçĕн Первомайски райсовет исполкомĕ çумĕнчи инспекторĕ Фарберова юлташ январĕн 25-мĕшне çитсе те районра миçе йĕлтĕрçĕ-боец хатĕрлени çинчен пĕлмест.

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ йĕлтĕрлĕ кроса иртерес тĕлĕшпе республикăри оргкомитета турĕ. Вăл ВЛКСМ Обкомне, Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи физкультурăпа спорт Комитетне, профсоюзсен обкомĕсене кроса хатĕрленес ĕçе хăвăртлатма хушрĕ. Йĕлтĕрçĕ-боецсене хатĕрлес ĕçе февралĕн 14-мĕшĕччен вĕçлемелле, судьясен коллегисене тумалла, комсомол организацийĕсен вăйĕпе йĕлтĕрсем тăвассине анлăн сарса ямалла, кросс пуçланиччен ĕçсинисен йĕлтĕрлĕ-массăллă ăмăртăвĕсене иртермелле, çавăн пекех хулисенче те районсенчи чи лайăх йĕлтĕрçĕсене палăртас тĕлĕшпе ăмăрту туса иртермелле.

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ парти райкомĕсемпе горкомĕсене кроса хатĕрленсе иртерме, февралĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр парти, профсоюз, комсомол тата физкультура организацийĕсен представителĕсенчен районсемпе хуласенче оргкомитетсем тума, Чăваш АССР Сывлăха сыхлав Халăх Комиссарĕ Лихачев юлташа кроса хутшăнакансен сывлăхне малтанах тĕрĕслес ĕçе организацилеме хушнă.

Йĕлтĕрлĕ кросс пуçланиччен шутлă кунсем тăрса юлчĕç. Паянтыранах кроса хутшăнакансене шута илсе тухмалла. Çакна асра тытмалла: пĕр çамрăк та комсомолецсемпе профсоюзсен йĕлтĕрлĕ кросĕн тулашĕнче ан юлтăр. Халех, вăхăта сая ямасăр, йĕлтĕрсене, крепленисене, йĕлтĕр туйисене йĕркене кĕртсе çитермелле, йĕлтĕр базисем тумалла. Йĕлтĕрçĕ-боецсем хатĕрлес тĕлĕшпе организацилĕнĕ командăсенчи çынсен сывлăхне медицина енĕпе тĕрĕслесе тухмалла. Кросс иртермелли вырăнсене палăртса хатĕрлемелле. Судьясен коллегийĕсенче ĕçлеме лайăх физкультурниксене—институтсенчи, техникумсемпе шкулсенчи физкультура преподавателĕсене, военруксене, йĕлтĕр спорчĕн мастерĕсене уйăрмалла.

Комсомолăн Чăваш республикинчи организацийĕ, çамрăксене йĕлтĕрпе çӳреме вĕрентес ĕçе лайăхрах организацилес тĕлĕшпе Комсомолăн Мари республикинчи организацине социализмлă ăмăртăва чĕнсе, Хĕрлĕ Çар XXV çул тултарнă тĕле республикăра 50.000 йĕлтĕрçĕ-боецсем, йĕлтĕр спорчĕн инструкторĕсем 1.500 çын тата комсомолецсемпе çамрăксен вăйĕпе 6.000 мăшăр йĕлтĕр хатĕрлеме обязательство илнĕччĕ. Йĕлтĕрлĕ кроса хатĕрленнĕ май, республикăри комсомол организацийĕсен çак обязательствăсене пурнăçлассишĕн те вăйлăн кĕрешмелле.

ВЛКСМ Центральный Комитечĕпе Профессиллĕ Союзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Совечĕ йĕлтĕрлĕ кроса лайăх хатĕрленсе иртернĕ организацисене пама Хĕрлĕ ялавсем тунă. Чăваш республикинчи комсомолпа профсоюз организацийĕсен çав ялава илессишĕн большевикла кĕрешмелле.

Пурте, йĕлтĕр çине!

Танксемпе самолетсем тума республикăра пĕтĕмпе 57.423.000 тенкĕ пухнă

Государство банкĕн Чăваш республикинчи контори пĕлтернĕ тăрăх, январĕн 26-мĕшĕ тĕлне республикăри ĕççыннисем танксемпе самолетсем тума пĕтĕмпе 57.423.000 тенкĕ укçа пухнă. Ку ĕçре Улатăр районĕ пĕрремĕш вырăн йышăнать. Вăл пĕтĕмпе 3.696.000 тенкĕ пухса хывнă. Иккĕмĕш вырăнта Пăрачкав районĕ—3.669.000 тенкĕ пухнă. Виççĕмĕш вырăнта Чкаловски район — 3.003.000 тенкĕ пухнă. Канаш, Шупашкар, Çĕрпӳ районĕсем те ку ĕçе начар мар организациленĕ. Чкаловски район çак ĕç валли январь уйăхĕнче кăна 1.166.000 тенкĕ пухнă.

Анчах танксен «Колхозник Чувашии» тата «Тракторист Чувашии» колоннисене, боевой самолетсен «Комсомолец Чувашии» эскадрильине тума укçа пухас ĕç Шăмăршă, Октябрьски, Йĕпреç, Шăхасан, Куславкка, Комсомольски районсенче вăраххăнрах пулса пырать. Шăмăршă районĕнче танксемпе самолетсем тума 1.272.000 тенкĕ, Октябрьски районра 1.345.000 тенкĕ пухнă.

Юратнă çулпуçăмăр Сталин юлташ нумай пулмасть республикăри колхозниксемпе колхозницăсене танксемпе самолетсем тума укçа пухнăшăн иккĕмĕш хут тав турĕ. Сталин юлташ çавăн пекех пирĕн республикăри комсомолецсемпе çамрăксене те самолетсем тума укçа пухнăшăн хĕрӳллĕ салампа саламласа тав турĕ. Çулпуçăн саламĕ çине танксемпе самолетсем тума укçа пухас ĕçе татах вăйлатнипе ответлер!

Совет Информаци Бюровĕнчен

Январĕн 27-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Январĕн 27-мĕшĕнче **Воронеж** фронтĕнчи войскăсем **Горшечное** ятлă район центрĕпе пысăк чугунçул станцине, **Березово-Колодезь, Старо-Меловое, Ново-Меловое,** 1-мĕш тата 2-мĕш **Городище** ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене тытса илнĕ.

Кăнтăр фронтĕнче пирĕн войскăсем **Егорлыкская** ятлă район центрне тата **Атаман** ятлă чугунçул станцине тытса илнĕ.

Çурçĕр Кавказ фронтĕнчи войскăсем **Ново-Александровская** ятлă район центрĕпе чугунçул станцине, **Средний Егорлык, Расшеватская, Григориполисская, Отрадно-Ольгинская** ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене, **Григориполисский** ятлă чугунçул станцине тытса илнĕ.

Кавказ лешъенчи фронтăн войскисем **Нефтегорск** ятлă хулана тата **Апшеронская** ятлă район центрне тытса илнĕ.

* * *

Январĕн 26-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен войскисемпе грузсем турттарса пыракан 150 автомашинине çити пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, артиллерин 10 батарейине пусарса лартнă, боеприпассен 6 складне тата горючи складне сирпĕнтерсе янă, тăшманăн 2 батальона çити пехотине сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Дон фронтĕнчи войскăсем противникăн уйăрăлса кайнă групписене пĕтерсе пынă. Сталинградăн вăтаçĕрти пайне çывăхрах вырăнта Н-ски чаçăн боецĕсем нимĕçсен 1.350 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ. Унпала юнашар участокра 2.000 гитлеровец параннă, вăл шутра нимĕçсен çыхăнăвĕн армейски полкĕ полк командирĕпе пĕрлех параннă. Сталинградран çурçĕреллерехре пирĕн боецсем нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсен уйрăм групписене пĕтерсе пынă.

* * *

Кăнтăр фронтĕнче пирĕн войскăсем наступлени туса пынă, вĕсен пĕр пайĕ противникăн контратакисене сирсе тăнă. Н-ски соединенин чаçĕсем малалла куçса пырса халăх пурăнакан темиçе пункта, çав шутра Егорлыкская ятлă станцăна та йышăнса илнĕ. Егорлыкская станицăшăн пынă çапăçура нимĕçсен 3 танкне пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра тăшманăн танкĕсемпе пехотин йышлă вăйĕсем контратака тума хăтланнă. Хаяр çапăçусем хыççăн тăшмана унăн малтанхи позицийĕсем патне хăваласа янă. Нимĕçсен 9 танкне çунтарса янă тата хăй тĕллĕн çӳрекен 3 орудине пĕтерсе тăкнă. Тăшман чĕрĕ вăй тĕлĕшĕнчен пысăк çухатусем тӳснĕ.

* * *

Кăнтăр-хĕвеланăç фронтĕнчи войскăсем малтанхи еннеллех çапăçса пынă. Белокуракинăран хĕвеланăçнерехре Н-ски соединени малалла куçса пырса халăх пурăнакан 10 пункта йышăнса илнĕ. Халăх пурăнакан пунктшăн пынă çапăçура нимĕçсем контратакăна пехотăн 2 батальонне тата 10 танк кĕртсе янă. Çапăçу пĕрре пĕр еншĕн, тепре тепĕр еншĕн ăнăçлă пулса пынă. Пирĕн чаçсем кун вĕçленнĕ тĕле нимĕçсене халтан янă хыççăн татăклăн атакăланă та халăх пурăнакан сав пункта йышăнса илнĕ.

* * *

Воронеж фронтĕнчи войскăсем малтанхи еннеллех наступлениллĕ çапăçусем туса пынă. Варваровка-Шилякино районĕнче кĕске вăхăт хушши пынă çапăçу хыççăн нимĕçсен çавăрса илнĕ групп, 5.000 салтакпа офицер, тыткăна параннă. Тыткăна параннă офицерсем хушшинче полковник, 2 майор тата капитан пур. Тепĕр участокра гвардейски чаçсем малалла куçса пырса халăх пурăнакан 3 пункта йышăнса илнĕ тата 400 гитлеровеца çити вĕлернĕ. Пĕр танк, 3 танкетка, 11 оруди, 18 пулемет, инженерла пурлăхсен складне тата апат-çимĕç складне тытса илнĕ.

* * *

Çурçĕр Кавказ фронтĕнчи войскăсем ăнăçлăн малалла куçса пырса нимĕçсене халăх пурăнакан темиçе пунктран хăваласа кăларнă. Н-ски чаçăн боецĕсем противникпа пĕр кун хушши çапăçса 9 танк, 26 автомашина, 11 оруди тата пулеметсем, автоматсем, винтовкăсем, боеприпассем нумай тытса илнĕ. Нимĕçсен 96 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ. Тепĕр участокра гвардеец-кавалеристсем халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ тата трофейăсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Калинин облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕ противникăн автоколоннине тапăннă. Совет патриочĕсем грузсем тиенĕ 18 автомашинăна пĕтерсе тăкнă, нимĕçсен 137 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ. Трофейăсем тытса илнĕ. Тепĕр отрядри партизансем халăх пурăнакан пĕр пунктри тăшман гарнизонĕпе çапăçса нимĕçсен 45 салтакне пĕтерсе тăкнă. Пăшалсемпе тата пулеметсемпе персе партизансем нимĕçсен пĕр самолетне ӳкернĕ.

* * *

Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Украинăри хуласемпе ялсене çĕмĕреççĕ тата мирлĕ халăха вĕлерсе пĕтереççĕ. 1942 çулхи декабрь уйăхĕнче гитлеровецсем Житомир облаçĕнчи çакăн пек ялсене çунтарса янă: Слаечно, Рудная, Тхорин, Бегунь, Городец, Рудная-Сырница, Юрово, Хочик тата Нерга ялĕсене çунтарнă. Городец ялĕнче нимĕçсем 180 çурта, Лученка ялĕнче 250 çурта, Славченко ялĕнче 370 çурта çунтарса янă. Рудная-Сырница ялĕнче гитлерла палачсем вырăнти 40 çынна пĕр сарая хупнă та чĕрĕллех çунтарса янă. Сочино ялĕнче фашистла палачсем 55 çулхи Димитрий Дубровеца, 60 çулхи Федор Игнатюка, 70 çулхи Мария Мельника, 18 çулхи Агрипина Гавриловăна тата ытти колхозниксене те тискеррĕн асаплантарса вĕлернĕ.

* * *

Югослави партизанĕсем Жепче ятлă хулапа чугунçул станцине тата Нови Шехера йышăнса илнĕ. 7 станковăй пулемет, 200 винтовка, 100.000 патрон, бронепоезд, 60 вагон тата ытти тĕрлĕ çар пурлăхĕсем те тытса илнĕ. Трагац, Ловинцы тата Госпич районĕсенче Югослави патриочĕсем Итали оккупанчĕсен темиçе атакине сирсе янă. Противникпа çапăçса партизансем 2 юсавлă танк тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

Январĕн 28-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Январĕн 28-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле **Кăнтăр-хĕвеланăç, Кăнтăр, Çурçĕр Кавказ, Воронеж, Волхов** тата **Ленинград** фрончĕсенчи войскăсем малтанхи еннеллех наступлениллĕ çапăçусем туса пынă.

* * *

Дон фронтĕнчи войскăсем тăшманăн пĕр-пĕринчен уйăрăлса кайнă групписене пĕтерсе пынă. Сталинградăн вăтаçĕрĕнчи пайне çывăхрах вырăнта нимĕçсем сахал хисеп тăнă. Тыткăна параннисен хисепĕ сехетсеренех ӳссе пырать. Тыткăна тата пĕр генерал, 3 полковник, 4 подполковник тата ытти старши офицерсем те параннă. Сталинградран çурçĕртерехре совет чаçĕсем тăшмана хĕссе пынă, унăн чĕрĕ вăйне пĕтерсе пынă. Трофейăсем нумай тытса илнĕ, трофейăсем хушшинче 46 танк, 214 оруди, 583 пулемет, 5.890 автомашина, бронепоезд тата тĕрлĕ 20 склад пур.

* * *

Кăнтăр фронтĕнчи войскăсем наступлени туса пынă, вĕсен пĕр пайĕ тăшманăн контратакисене сирсе тăнă. Н-ски часть нимĕçсенчен флангпа пырса иртсе кайнă та, сасартăк пырса çапса, халăх пурăнакан пункта кĕрсе кайнă, çав пункта тытса илнĕ. Пĕр бронемашина, 3 оруди, 14 пулемет, 8 противотанковăй пăшал, выльăх апачĕн складне тата хĕçпăшалсен складне тытса илнĕ. Тепĕр участокра тăшманăн контратакине сирсе янă. Икĕ танка пĕтерсе тăкнă тата нимĕç пехотине пĕр рота ытла вĕлерсе пĕтернĕ

* * *

Кăнтăр-хĕвеланăç фронтĕнче совет танкисчĕсем, пехотăпа пĕрле кĕрешекенскерсем, халăх пурăнакан 2 пункта тытса илнĕ. Нимĕç батальонне çĕмĕрсе, тăкнă. Хăй тĕллĕн çӳрекен пĕр оруди, 5 миномет, бензин тултарнă 30 пичке, çар пурлăхĕ тиенĕ 34 лав, радиостанци тытса илнĕ.

* * *

Воронеж фронтĕнчи войскăсем наступлениллĕ çапăçусем туса пынă. Тăшман халăх пурăнакан 2 пункт районĕнче совет чаçĕсене малалла кайма чарасшăн пулнă. Хаяр çапăçусем хыççăн нимĕçсем пысăк çухатусем тӳссе каялла чакнă. Пирĕн боецсем трофейăсем нумай тытса илнĕ. Тепĕр участокра Н-ски часть тăшманăн 540 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ, 8 оруди, 22 пулемет, 57 автомашина тата боеприпассен складне тытса илнĕ.

* * *

Çурçĕр Кавказ фронтĕнчи войскăсем малалла кайса халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Н-ски чаçăн танкисчĕсем тăшман оборонин опорнăй пунктне çапса аркатнă, нимĕçсен 200 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. 3 танк, 17 оруди тата 26 автомашина тытса илнĕ. Пирĕн чаçсем Белая Глина районĕнче 76 автомашина тата тĕрлĕ грузсем тиенĕ 246 вагон тытса илнĕ. Ново-Александровская районĕнче нимĕçсенчен çар пурлăхĕ тиенĕ 3 поезда тытса илнĕ, çав пурлăх хушшинче 300 автомашина, 230 мотоцикл, 2 вагон винтовка патронĕсем, пĕр вагон винтовка, пĕр вагон пулемет, 2 вагон снаряд, 4 вагон автомотор тата 3 вагон инженерла пурлăх пур.

* * *

Орел облаçĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан отрядри партизансен пĕр ушкăнĕ январь варринче тăшманăн поездне ӳпĕнтерсе янă. Пĕр паровоз, боеприпассем тиенĕ 18 вагон тата горючи тултарнă 6 цистерна çĕмĕрĕлнĕ. Тепĕр отрядри партизансем район центрĕнче вырнаçнă нимĕç гарнизонне тапăннă. Совет патриочĕсем 200 гитлеровеца çити вĕлернĕ. Юсавлă 9 пулемет, 64 винтовка, темиçе пин патрон тата тумтирсемпе çар хатĕрĕсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Ростов облаçĕнчи Нестеркин хуторĕнче пурăнакан çынсем нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем мирлĕ халăха çаратни, пусмăрлани тата мăшкăллани çинчен акт çырнă. Çав актра çапла каланă: «Нимĕçсем киличчен эпир пуян та телейлĕ пурăннă. Пирĕн тырă, пахча-çимĕçсем нумай пулнă. Кашни колхозник пурлăх енчен çителĕклĕ пулнă. Гитлеровецсем пиртен çавсене туртса илчĕç. Вĕсем колхоз хирĕнчи мĕнпур тырра туртса илчĕç. Эпир хамăрăн пахчасенче мĕн лартса ӳстернине пурне те Германи çарĕн харпăрлăхĕ тесе пĕлтерчĕç. Пире хамăр пахчасенче пĕр хăяра та татма ирĕк памарĕç. Тăватă уйăх хушшинче бандитсем халăхран 300 сысна, 20 лаша, 13 ĕçлекен вăкăр, 1.000 пуç ытла кайăк-кĕшĕк турт илчĕç. Салтаксем çуртсене кĕрсе каятчĕç те какай, çу, сĕт, тумтирсем, атă-пушмаксем тата кĕпе-йĕмсем илсе тухатчĕç. Гитлеровецсем хресченсене хĕнемелли йĕрке туса хучĕç: çăмартана вăхăтра памасан — хулăпа 15 хут çапмалла, колхозник хăйĕн чăххине пуссассăн — 25 хут çапмалла, сысна çурине çыртармасассăн—25 хут çапмалла. Фашистла палачсем пирĕн колхоз председательне Николай Голева вĕлерчĕç. Хăйсем чакас умĕн нимĕçсем мĕнпур хĕрсене Германие каторгăна ăсатасшăн пулнă. Анчах Хĕрлĕ Çар килсе çитрĕ те пире фашистла чуралăхран хăтарчĕ». Акта М. Воробьева, А. Марченко, Ф. Антипов тата хуторти ытти колхозниксем те алă пуснă.

Колхоз тимĕрçисен ăмăртăвĕ

ЕЛЧĔК, январĕн 28-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри 24 колхоз хăйсен ялхуçалăх машинисене юсаса çуракине тухма хатĕрлесе çитерчĕç. Тимĕрçĕсем хăйсен колхозĕсенче çуракинче ĕçлемелли машинасене юсаса пĕтернĕ хыççăн кӳршĕри колхозсене пулăшма тытăнчĕç. Халĕ районра 28 тимĕрçĕ лаççи ĕçлет. Вĕсенче пурĕ 684 плуг, 124 сеялка, 981 сӳре, 94 культиватор юсанă. Колхоз тимĕрçисем Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă кун тĕлне тата 316 плуг, 50 сеялка, 319 сӳре, 61 культиватор юсаса ялхуçалăх машинисене хатĕрлесе çитерес ĕçе пĕтĕмĕшпех вĕçлеме тăрăшаççĕ.

«Осоавиахим» колхоз тимĕрçи Каринкин юлташ ялхуçалăх машинисене юсаса пĕтерчĕ. Халĕ вăл кӳршĕри «Красные Темяши», тата Тимирязев ячĕпе тăракан колхозсен ялхуçалăх машинисене тăрăшса юсать.

Нимĕçсем Миллеровăра мĕнле хуçаланнă

КĂНТĂР-ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ. Халĕ нимĕçсем Миллеровăра вăрăхурахла хуçаланни çинчен çĕнĕ хыпарсем пĕлнĕ. Хулан çунă пайĕнчен тăхăр пайĕ çунса кăмракланса выртать. Салтыков-Щедрин, Вокзальная, Железнодорожная, Горький, Верховая урамĕсенче çĕмĕрĕлмен пĕр çурт та çук. Луначарский, Ленин, Элеваторская тата Фрунзе урамĕсенче темиçе çурт çеç çăлăнса юлнă.

Хулари çынсем çапла каласа параççĕ:

— Юлашки виçĕ кун хушшинче нимĕçсем хулана план тăрăх çунтарса, сирпĕнтерсе пынă.

Çуннă корпуссем тавра минăсен ещĕкĕсем, бензин пичкисем сапаланса выртаççĕ. Вут тĕртекенсем командовани приказĕ тăрăх ĕçленĕ. Вĕсем хăйсем поражени тӳснĕшĕн тавăрнă. Усал çилĕпе вĕсем Совет çыннисем темиçе çул хушши ĕçлесе тунă япаласене çунтарса пынă. Заводсемпе фабрикăсен, институтсемпе шкулсен çуртчĕсене сирпĕнтерсе янă. Хулана мĕн чухлĕ сиен кӳнине шутласа кăларман-ха, анчах та вăл, паллах ĕнтĕ, темиçе çĕр пин тенкĕлĕх хисепленет.

5.000 яхăн йĕкĕтпе хĕре, арçынпа хĕрарăма нимĕçсем Германе хăваласа кайнă. Ноябрьте вĕсем унта икĕ эшелон янă, декабрьте—виççĕмĕш эшелона янă. Германие ăсатакан комисси Чкалов урамĕнче, 8-мĕш номерлĕ çуртра вырнаçса тăнă. Унăн пуçĕнче капитан **Юргенс** тăнă. Кулленех унта Германие яма палăртнă çынсене чĕнсе пынă та вĕсен документчĕсене туртса илнĕ, кашни валли хăйне уйрăм карточка çырса хунă. Унтан вĕсене ирсĕррĕн мăшкăлллама тытăннă. Хĕрсене врач кабинетне медицина енчен пăхма тесе иле-иле кĕнĕ; унта креслăсем çинче офицерсем ларнă, вĕсем, намăса пĕлмесĕр кулса, çарамасланнă хĕрсене пăхнă.

Çапла нимĕçсем тарçă сутакан пасарсенчи йăласене тепĕр хут пурнăçа кĕртнĕ. Акă суйласа илнĕ çынсене ăсатмалли кун килсе çитнĕ. Салтаксем амăшĕсене ачисенчен уйăрнă, хĕрарăмсене прикладсемпе хăратса йĕркен-йĕркен тăратса тухнă, вара хуйхăллă колонна вокзал патнелле утнă, ăна вăйлă хурал хуралласа пынă. Станцире вĕсене сивĕ товарнăй вагонсене хăваласа кĕртнĕ. Поезд тапранса кайнă.

Ранса Давыденко çурма çула çитсен тарнă, вăл халь ирĕке кăларнă Миллеровăна таварăннă. Давыденко çапла каласа парать:

— Вагонра питех те тăвăр пулчĕ, пĕр енчен тепĕр енне çаврăнса тăма та пулмарĕ. Кашни вагонрах надзиратель пурчĕ, вăл мĕн çинчен те пулсан ыйтсанах патакпа çапатчĕ. Пĕтĕм çул тăршшĕпех пире выçăпа асаплантарчĕç. Вĕри апата эпир пуçласа Каменскра çимĕрĕмĕр, пире йӳçнĕ шӳрпе пачĕç. Полтавăра борщ пачĕç, анчах ăна никам та çимерĕ: вăл пăтранчăк шыв çеç пулчĕ. Лозовая станцинче вагона 400 грамм колбасса пăрахрĕç, 48 çын валли ĕнтĕ вăл.

Январĕн 13-мĕшĕнче нимĕç автоматчикĕ Подгорный хваттерне пырса кĕнĕ. Унта вăл çĕвĕ çĕлесе ларакан 5 хĕре курнă. Вĕсене вăл урама хăваласа кăларнă та автоматпа персе вĕлернĕ. Фашистла вăрăхурах персе вĕлернĕ çынсен ячĕсем: Паша Исаенкова—20 çулхи хĕр, Маруся Исаенкова—18 çулхи хĕр, Лиза Пичугина—17 çулхи хĕр, Лида Подгорная—19 çулхи хĕр. Пиллĕкмĕш хĕрĕн ятне пĕлеймен: вăл иртнĕ кун Ворошиловградран килнине çеç пĕлеççĕ.

Хула нимĕçсене тавăрма ыйтать.

Д. РУДНЕВ.

Тимĕрçĕсен районри пухăвĕ

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Çак кунсенче районра колхоз тимĕрçисен пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура тимĕрçĕсем Красноармейски районри «Янмурзино» колхозри Гордеев тимĕрçĕн çырăвне сӳтсе-явса, конкретлă обязательствăсем илчĕç. Кашни тимĕрçĕ хăйсен колхозĕнчи ялхуçалăх машинисене юсаса пĕтернĕ хыççăн тата 5—6 колхозăн машинисене юсаса çуракине хатĕрлеме пулчĕç.

Тимĕрçĕ Орлов юлташ «Мурат» колхозри ялхуçалăх машинисене пĕтĕмĕшпех юсаса лартрĕ. Халĕ Чапаев ячĕпе тăракан колхоз машинисене юсать. Çак вăхăтра Орлов юлташ хăйпе пĕрле молотобоец пулса ĕçлекен Мария Корчакова колхозницăна хăй тĕллĕнех тимĕрçĕ ĕçне тума вĕрентсе çитерчĕ.

Л. ИМЕРКИНА.

Производствăна урăхлатса çĕнетсе пыни пысăк перекет кÿрет

Вăрçă пирĕн предприятисем умне пур ĕçре те, пур чух та тата пурне те перекетлес задача кăларса тăратрĕ. Уйрăмах халĕ электроэнергие, топливăна тата чĕртаварсемпе материалсене ытларах перекетлемелле.

Пирĕн предприятисенче перекетлĕхшĕн кĕрешмелли майсем нумай. Çав майсенчен пĕри вăл—производствăна урăхлатса çĕнетсе пыни, рационализаторла сĕнÿсем пани пулать.

Канашри вагонсем юсакан заводри стахановецсем, мастерсем тата инженерсемпе техниксем хăйсен иртнĕ çулта пулса иртнĕ канашлăвĕнче перекетлĕхшĕн кĕрешмелли мероприятисене палăртса хăварчĕç. Халĕ вĕсем çав мероприятисене ĕçе кĕртсе пыраççĕ.

Рационализаторла сĕнÿсем парса вĕсемпе ĕçре усă курас тĕлĕшпе заводра инструментальнăй цех коллективĕ (начальникĕ Савенко юлташ) начар мар ĕçлет. Кунта çак ĕçе мастерсемпе стахановецсем хăйсем активлăн хутшăнса ертсе пыраççĕ. Мастер Петров юлташ юлашки 4 уйăх хушшинче 6 рационализаторла сĕнÿ панă. Вĕсене пурне те сийĕнчех пăхса тухса ĕçе кĕртнĕ. Петров юлташăн сĕнĕвĕсемпе усă курни завода çулталăкне 40.000 тенкĕ перекет кÿрет.

Савенко юлташăн цехĕнче çулталăк хушшинче çавăн пек рационализаторла сĕнÿсем вунщарăн пухса, вĕсенчен хĕрĕхĕшне ĕçе кĕртнĕ. Вĕсем иртнĕ çулталăкра 33.002 тенкĕ перекет кÿнĕ.

Компрессор станцийĕн мастерĕ Мальнев юлташ та производствăна лайăхлатса пырассипе хытă интересленет. Вăл кĕске вăхăт хушшинчех темиçе лайăх сĕнÿ панă. Вĕсенчен пĕр сĕнĕвне ĕçе кĕртнĕ май, компрессорсен клапанне урăхлатса лайăхлатнă. Çапла туни компрессор станцине чарăнмасăр ĕçлеме пулăшать, завода пысăк перекет кÿрет.

Заводăн технически директорĕ Иванов, вагонсем юсакан цехри работниксем Мысникпа Карпов юлташсем те рационализаторла сĕнÿсем тăтăшах параççĕ. Иванов юлташ хаклă йышши материалсене урăх япаласемпе улăштармалла тăвас тĕлĕшпе ĕçлет. Çак енĕпе вăл темиçе сĕнÿ панă ĕнтĕ. Çыхăну станцийĕн начальникĕ Фоменко юлташ кăмрăк мембранăсене тимĕртен тунă мембранăсемпе улăштарассишĕн тăрăшать.

Монтажсемпе ремонтсем тăвакан цехри стахановецсем ĕç тухăçлăхне ÿстерес, пахалăха лайăхлатас тĕлĕшпе рационализаторла сĕнÿсем параççĕ. Стахановец Надобаровский юлташ панă сĕнÿпе усă курса, пĕр йышши станоксене темиçе хут хăвăртрах ĕçлеттерекен тунă. Çавăн пекех кунта Примакпа Лотманизов инженерсен сĕнĕвĕсемпе те ĕçре ăнăçлăн усă кураççĕ.

Тимĕр-тăмăр шăратакан цех коллективĕ (начальникĕ Соколовский юлташ) панă чылай сĕнÿсенчен тăххăрĕшĕпе усă курни завода ку таранччен 87.000 тенкĕ перекет кÿнĕ. Теплоэлектроцентраль (ТЭЦ) коллективĕ панă 7 сĕнÿпе 58.000 тенкĕ перекетленĕ.

Калас пулать, вагонсем юсакан заводри рационализаторсем иртнĕ çулхине начар мар ĕçленĕ. Вĕсем 66 сĕнÿпе ĕçре усă курса завода 300.000 тенкĕ перекет кÿнĕ.

Кăçалхи çул завод коллективĕ производствăна рационализацилесе пынипе пĕр миллион тенкĕ перекетлеме задача лартнă. Çак задачăна пурнăçа кĕртес пулсан, заводри рационализаторсен татах та хăюллăнрах ĕçлес пулать, рационализаципе изобретательство ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтерес пулать. Çав çитменлĕхсенчен пĕри вăл—панă сĕнÿсене çийĕнчех пăхса тухманни пулса тăрать. Сăмахран, утильцех начальникĕ Козлов юлташ пĕр сĕнĕве пăхса тухмасăр 10 кун выртарнă хыççăн каялла тавăрса панă. Сĕнĕве вăхăтра пăхса тухса ĕçе кĕртни пысăк усă пама пултарнă. Тепĕр цех начальникĕ Баймуратов юлташ та рационализаторла сĕнÿсем çине тимсĕррĕн пăхать. Паровой мăлатук ĕçленĕ вăхăтра тухакан пăспа усă курасси пирки панă сĕнĕве вăл чылай вăхăт пăхса тухмасăр выртарнă.

Производствăна урăхлатса çĕнетессишĕн, çапла майпа çĕршыва перекет кÿрессишĕн кĕрешесси—пирĕн предприятисенчи мĕнпур рабочисен, инженерла-техникла работниксен тивĕçĕ. Çакна вĕсен манма юрамасть, çакна вĕсен вăрçă вăхăтĕнчи тимлĕхпе пурнăçа кĕртсе пымалла.

Т. ИВАНОВ.

Танксен „Лесоруб Чувашии" колоннине тума

ÇĔМĔРЛЕ. Йĕпреç леспромхоз коллективĕн пуçарăвне йышăнса илсе, Çĕмĕрлери механизациленĕ вăрман пунктĕнче ĕçлекенсем танксен „Лесоруб Чувашии" ятлă колоннине тума 42.000 тенкĕ укçа пухнă. Çак ĕçре уйрăмах Павловский юлташ ертсе пыракан участокра вăрман касакансемпе вутă турттаракансем лайăх пример кăтартнă. Вĕсем пĕр-икĕ кун хушшинчех 12.000 тенкĕ пухса панă. Вăрман касакансем Работкин, Федоров юлташсем 500-шер тенкĕ, тракторист Тексин юлташ 300 тенкĕ панă.

Танксен „Лесоруб Чувашии" ятлă колоннине тума укçа пухас ĕç малалла пырать.

(Хамăр корр.).

Пирĕн земляксем

Василий Ильин

Фронтăн малти линийĕ патнĕ пыракан çул тăрăх боеприпассемпе продуктсем тиенĕ автомашинăсем тата лавсем час-часах иртсе çÿреççĕ. Çанталăк каштах ăшăтнине пула, лапамлă вырăнсенчи юр шĕлкĕшленнĕ. Автомашинăсем, моторлă киме хÿмсене сирсе пынă пек, шĕлкĕшленнĕ юра çулăн икĕ айккинелле сирпĕнтерсе пыраççĕ.

Командир Ильин взводĕнчи виçĕ автомашина яла çитсе пысăках мар склад патĕнче чарăнчĕç. Продфуражнăй снабжени отделенийĕн представителĕ полевой пекарньăран тиесе килнĕ çăкăра йышăнсассăн, водительсем хăйсен командирĕнчен çĕнĕ грузсем тиесе килме наряд илчĕç. Çула майăн пĕрле кайма тесе, Проваторовпа пĕрле кабинăна кĕрсе лартăм.

Ик-виç кун каялла кăна вăйлă çапăçу пынă вырăнпа пыратпăр. Çултан аякрах мар нимĕç офицерĕн вилли выртать, çийĕнче кăвак френч, уринче сăран атă. Нимĕçсем хăйсен виллисене те пухса ĕлкĕреймен. Çул çинче пирĕн артиллери персе çĕмĕрнĕ самоходнăй пушка тăрать.

— Вăрçă пуçланнă хыççăн пилĕк уйăхран пирĕн хула çывăхĕнче вăйлă çапăçу пычĕ. Эпĕ ун чухне рабочисен батальонĕнчеччĕ. Хĕрлĕ Çар чаçĕсемпе пĕрле кĕрешсе, нимĕçсене хамăрăн хулана кĕме памарăмăр,—сăмах тапратрĕ водитель Владимир Проваторов.—Хула çывăхне фрицсемпе ганссем пиншерĕн тăкăна-тăкăна юлчĕç. Чĕрĕ юлнисене хĕвеланăçнелле хăваласа ятăмăр...

Халĕ вăл командир Василий Антонович Ильин взводĕнчи красноармеец-шофер.

— Командира эпир пурте юрататпăр,—тет вăл. Фронтра час-часах йывăрлăхсем килсе тухаççĕ, кĕтмен çĕртен мар, фронтра пурне те кĕтсех тăмалла. Ильин юлташ йывăр обстановкăра тĕрĕс решени йышăнать. Тăшман самолечĕсем бомбăсем пăрахаççĕ-и, пулеметсенчен переççĕ-и, е тăшман артиллерийĕ персе тăракан сектора лекетĕн-и, — вăл пур çĕрте те хăйĕн боецĕсене сыхласа хăварать. Çавăнпа юратаççĕ ăна.

Сакăр грузовик продуктсем тиеме станци патнелле пынă. Тăшманăн бомбардировщикĕсем пĕлĕт хушшинчен чăмса тухса, автоколонна çине тăраннă. Шоферсемшĕн ку кĕтмен япала пулман. Машинăсемпе е питĕ хăвăрт, е питĕ ерипен пынă. Тăшман пăрахакан бомбăсем нимĕнле сиен те кÿмен, пулеметсенчен перекен пулясем юр çине тăрăна-тăрăна юлнă, автомашинăсене нимĕнле сиен те кÿмен.

Богдановпа Купцов шоферсем тунă йăнăша аса илет Ильин юлташ. Çав бомбардировщиксем 20 метр чухлĕ аяла анса пулеметсенчен пеме тытăнсан, вĕсем машинăсене тăратса, хăйсем çул айккинелле тарма пăхнă. Командир приказ панă хыççăн машинăсемпе ăнăçлăнах вăрмана кĕрсе ĕлкĕрнĕ. Анчах та çăхансем вăйлă атакăланине халĕ те манмаççĕ боецсем. Хăшпĕр машина кабинисене пулясем шăтара-шăтара тухнă. Взвод командирĕпе пĕрле ларса пыракан Вдовинăн машина кузовне бомба ванчăкĕсем шăтарса пĕтернĕ. Командир тĕрĕс решени йышăннипе пула пĕр машина та, пĕр çын та стройран тухман.

Командир приказĕ — закон. Хуть те мĕнле условире те тата хуть те мĕнле обстановкăра та командир приказне тĕрĕс пурнăçа кĕртмелле.

— Икĕ кун хушши,—каласа парать командир,—вĕçĕмсĕр рейсра пултăмăр. Çил-тăвăл тухрĕ. Куçа уçса пăхма та çук. Машинăпа машина хушшинчи йĕр çухалсах пырать. Питĕ йывăр пулчĕ, çавах та снарядсем, минăсем, патронсем тиенĕ сакăр грузовик кирлĕ вырăна вăхăтра пырса çитрĕç.

Красноармеецсемпе кĕçĕн командирсем хăйсен взвод командирне юратаççĕ тата мухтаççĕ. Аслă командирсемпе начальниксем те унăн ĕçĕсем пирки ăшă кăмăлпа калаççĕ. Командир Ильин юлташ хăйĕн боецĕсемпе мухтанать. Водительсенчен Мишагин, Проваторов, Филимонов юлташсем „За отвагу" медаль илнĕ. Чылай шоферсен машинисем çине „Отличник-водитель» тесе çырса хунă.

Василий Антонович Ильин вунтăватă çул шоферта ĕçленĕ. Халĕ вăл рядовой шофер мар — командир. „За отвагу" медаль илнĕ. „Отличник-водитель" звани илессишĕн шоферсем хушшинче кĕрешÿ сарăлса пырать.

Василий Антонович Ильин чылай хушă парти Чăваш Обкомĕнче шоферта ĕçленĕ. Халĕ вăл командир, иккĕмĕш рангри воентехник. Хăйĕн пĕлĕвĕпе опытне ыттисене парать.

Старший лейтенант **Т. Майоров.**

Тăшмана çĕнтерме хамăрăн мĕнпур вăя хурар

Шупашкарти ĕççыннисем Верховный Главнокомандующий Сталин юлташ панă приказа пысăк çĕкленÿпе кĕтсе илчĕç. Хĕрлĕ Çарăн фронтри пысăк çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса, хулари предприятисенче, шкулсенче тата учрежденисенче митингсем пулса иртеççĕ.

Январĕн 27-мĕшĕнче тумтирсем çĕлекен мастерскойри рабочисемпе работницăсен митингĕ пулса иртрĕ. Унта ВКП(б) организаци секретарĕ Каляканов юлташ пирĕн войскăсен фронтри çĕнтерĕвĕсем çинчен доклад туса пачĕ.

Сталин юлташ приказĕ çине ответлесе, мастерскойра ĕçлекенсем уйăхри ĕçсен планĕсене ăнăçлăн тултарса пыма, ĕç пахалăхне лайăхлатма пулчĕç. Ĕç тухăçлăхне ÿстерме пулса уйрăм рабочисемпе работницăсем те обязательствăсем илчĕç. Закройщица Долгорукова юлташ хăйĕн нормине 200 процент тултарса пыма сăмах пачĕ.

Ют çĕршывсенче

Черчилльпе Рузвельт Çурçĕр Африкăра тĕл пулса калаçни

ЛОНДОН, январĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Англин информаци министерстви Великобритани премьер-министрĕ Черчилль тата США президенчĕ Рузвельт Касабланка çывăхĕнче (Франци Марокки) пĕр-пĕринпе тĕл пулса калаçни çинчен официальнăй пĕлтерÿ пичетлесе кăларнă. Калаçура икĕ çĕршывăн штабĕсен начальникĕсем тата ытти советниксем те пулнă. Çав пĕлтерÿре çапла каланă:

«США президенчĕ тата Великобритани премьер-министрĕ Касабланка çывăхĕнче пĕр-пĕринпе январĕн 14-мĕшĕнчен пуçласа канашланă. Вĕсемпе пĕрле икĕ çĕршывăн штабĕсен начальникĕсен пĕрлешнĕ группи пулнă, уйрăмăн илсе кăтартсан унта çаксем пулнă: Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенчен: генерал Джордж Маршалл—Америка çарĕн штабĕн начальникĕ, адмирал Кинг—Америкăн тинĕс-çар флочĕн главнокомандующийĕ, генерал-лейтенант Арнольд—Америка çарĕн сывлăш-çар вăйĕсен командующийĕ; Великобританирен флот-адмиралĕ сэр Дадли Паунд—адмиралтействăн пĕрремĕш лорчĕ, генерал сэр Аллан Брук—империн генеральнăй штабĕн начальникĕ, авиацин главнăй маршалĕ сэр Чарльз Портал—сывлăш-çар вăйĕсен штабĕн начальникĕ. Вĕсен помощникĕсем пулса унта çаксем пулнă: генерал-лейтенант Соммервелл—Америка çарĕн интентант службин начальникĕ, фельдмаршал сэр Джон Дилл—Англин Вашингтонри пĕрлешнĕ миссийĕн пуçлăхĕ, вице-адмирал лорд Луис Маунтбэттен—десантлă операцисен командующийĕ, генерал-лейтенант сэр Хастингс Иссай—оборона министрĕ çумĕнчи штаб начальникĕ, çавăн пекех тата унта икĕ çĕршывăн штабĕсенчи темиçе офицер пулнă. Вĕсемпе тата çаксем курнăçнă: г. Мэрфи тата г. Макмиллан, генерал Эйзенхауэр—союзниксен Çурçĕр Африкăри экспедициллĕ вăйĕсен главнокомандующийĕ, флот адмиралĕ сэр Эндрью Кэннингхэм—союзниксен Çурçĕр Африкăри экспедициллĕ тинĕс-çар вăйĕсен командующийĕ, генерал Спанто—союзниксен Çурçĕр Африкăри экспедициллĕ вăйĕсен авиацийĕн командующийĕ, Америка çарĕн генералĕ Кларк; вăта-çĕр-хĕвелтухăçĕнчи штабран пырса вĕсемпе çаксем курнăçнă: генерал сэр Гарольд Александр, авиаци маршалĕ сэр Артур Теудер тата Америка çарĕн генерал-лейтенанчĕ Эндрью.

Президентпа пĕрле г. Гарри Гопкинс пынă, вĕсем çумне вара г. Аверелл Гарриман хутшăннă. Премьер-министрпа пĕрле Англин вăрçă вăхăтĕнчи транспорт министрĕ лорд Лезерс пынă. 10 кун хушшинче çав пĕрлешнĕ штабсем тăтăшах ларусем тунă, вĕсем кунне икшер, виçшер хут курнăçса канашланă, ларусем хушшинче президентпа премьер-министра калаçу мĕнле пыни çинчен каласа панă. Канашлусенче вăрçăн пĕтĕм тĕнчери фрончĕсенче ĕçсем мĕнле пынине пăхса тишкĕрсе тухнă тата вăрçа çĕр çинче те, тинĕс çинче те, сывлăшра та лайăхрах туса пыма кирлĕ ресурссене пурне те палăртнă. Икĕ союзник хушшинче çав тери вăрăма тăсăлнă канашлу халиччен нихăçан та пулманччĕ-ха. Икĕ çĕршывăн руководителĕсем тата вĕсен штабĕсем 1943-мĕш çулта Германипе Италие тата Япони хирĕç пыракан кампанире 1942-мĕш çулăн вĕçĕнче событисем союзниксемшĕн уççăнах лайăхланнипе ытларах усă курас тесе тумалли мероприятисемпе çар планĕсем тĕлĕшпе пĕр-пĕринпе йăлтах калаçса татăлнă.

Премьер Сталина президентпа тата премьер-министрпа курнăçса калаçма пĕтĕм чĕререн чĕннĕччĕ, вăл курнăçма пултарнă пулсан вара нумай хĕвелтухăçнерехре курнăçса калаçма пулатчĕ. Анчах Сталин хальхи вăхăтра хăй верховнăй главнокомандующий пулса ертсе пыракан вăйлă наступлени пынă вăхăтра, Российйăран кайма пултараймарĕ. Президентпа премьер-министр Россия типçĕр çинчи пĕтĕм фронтра вăрçăн мĕн тери пысăк йывăрлăхне хăй çинче ăнăçлăн тÿссе иттернине йышăнаççĕ. Вĕсен тĕп тĕллевĕ—противника союзниксемшĕн меллĕрех районсенче йывăртарах вăрçа кĕртсе ярса, вырăс армийĕсем тÿсекен йывăрлăхăн май килнĕ таран пысăкрах пайне союзниксем çине илесси пулса тăнă. Премьер Сталина калаçу мĕнле пыни çинчен тĕплĕн пĕлтернĕ. Президентпа премьер-министр генералиссимус Чан Кай-шипе тăтăшах çыхăнса тăнă. Вĕсем Китая вăл пĕрлехи ĕçшĕн питĕ чаплăн тата пĕр пек вăйлăн туса пыракан кĕрешÿре пулăшас тесе палăртнă мероприятисем çинчен каласа панă.

Президентпа премьер-министр пĕр-пĕринпе тĕл пулса калаçни Жиро генерала генеральнăй штабсен пĕрлешнĕ группипе канашлама чĕнме тата ăна де Голльпе тĕлпулса калаçтарма май пачĕ. Икĕ генерал та пĕрле тĕплĕн канашларĕç. Президент, премьер тата генеральнăй штабсен пĕрлешнĕ группи, 1943 çулхи наступлениллĕ кампанисен планĕсене хатĕрлесе çитерсе, халь ĕнтĕ çав плансене пурнăçа кĕртмешкĕн хăйсен çĕршывĕсене саланчĕç.

1943 çулхи январĕн 27-мĕшĕ тесе паллă тунă».

Де Голль генерал Жиро генералпа тĕлпулни

ЛОНДОН, январĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Англи информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Францин Çурçĕр Африкинче де Голль генералпа Жиро генерал малтанхи хут тĕл пулнă. Тĕлпулса калаçнă хыççăн, вĕсем пĕрле çакăн пек пĕлтернĕ:

«Эпир тĕл пулса калаçрăмăр. Эпир хамăр шухăшсене каласа партăмăр. Тĕллевсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе эпир пĕтĕмĕшпех килĕшсе тăратпăр, çав тĕллевсем — противника пĕтĕмĕшпех аркатса тăкса, Францие ирĕке кăларасси пулаççĕ. Çак тĕллеве хăйсен союзникĕсемпе çумма-çуммăн тăрса кĕрешекен мĕнпур французсене вăрçăра пĕрлештерсе çеç пурнăçа кĕртме пулать».

Лондона таврăннă хыççăн де Голль генерал Африкăра президент Рузвельтпа тĕлпулни çинчен каласа панă. «Рузвельт Франци çине ăшă кăмăлпа пăхни Франци халăхĕ тăшмана хирĕç хăйĕн территоринче те, çавăн пекех унăн тулашĕнче те туса пыракан кĕрешÿре уйрăмăнах савăнтарать. Англи премьер-министрĕпе тепĕр хут калаçма майсем илсен те, эпĕ çавăн пекех савăнтăм».

Францин Национальнăй Комитечĕ пичетлесе кăларнă заявленире çапла каланă: «Африкăра союзниксен конференцийĕ пулнă май, де Голль генерал Катру генералпа тата Д. Аржелье контр-адмиралпа пĕрле Францин Çурçĕр Африкинче Жиро генералпа тĕл пулнă. Францин вăрçăри вăйĕсене тата унăн çĕр çинчи, тинĕсри тата сывлăшри хĕçпăшаллă вăйĕсене пĕрлештерессипе çинчен калаçнă. Çакăн хыççăн пур ĕçсене те халех пĕрле туса пыма кирли çинчен решени йышăннă. Кунсăр пуçне, калаçу вăхăтĕнче вăрçăра французсен вăйне пĕрлештермелли тата вăйлатса пымалли условисене те малтанласа пăхса тухнă, çавăн чухне Францин Çурçĕр тата Хĕвеланăç Африкинчи çĕнĕ лару-тăрăва шута илнĕ. Çак ыйту тăрăх малашне те калаçусем пулмалла. Де Голль генерал тата Национальнăй Комитет, малтанхи пекех, Франци владенийĕсем тата унăн хĕçпăшаллă вăйĕсемпе Францири хăйĕнчи вăйсем çирĕп союзлă пулччăр тесе, çав союз Франци халăхне тата унăн ирĕкне тивĕçлĕ условисенче пулса тăтăр тесе тăрăшаççĕ».

Англи войскисем Триполитанире наступлени туни

ЛОНДОН, январĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Генерал Леклерк ертсе пыракан француз войскисен штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, Леклеркăн малта пыракан чаçĕсем ĕнер Триполие пырса кĕнĕ.

Англири Информаци министерстви çапла пĕлтерет: январĕн 25-мĕшĕнче акăлчансен малти чаçĕсем Триполирен хĕвеланăç еннелле çыран хĕрринчи çулпа çеç мар, фронтăн ытти участокĕсенче те малалла куçнă. Монтгомери войскисем Триполирен хĕвеланăç еннелле малалла кайнă чухне хăйсем Триполие иличчен тÿссе иртернĕ йывăрлăхсемпех тĕл пулаççĕ. Вĕсен минăланă çулсем тăрăх пыма лекет, кунсăр пуçне тата çулсене нумай çĕрте çĕмĕрсе пĕтернĕ. Çав вăхăтрах противникăн кайра пыракан чаçĕсем Англи войскисене хирĕç чылай вăйлăн тăрса çапăçаççĕ.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Кастель Бенито хулине илнĕ чухне 8-мĕш арми тĕнĕл держависен 200 самолетне тытса илнĕ. Вĕсенчен 30 самолечĕпе çийĕнчех усă курма пулать.

Призывниксем

Хĕрлĕ кĕтесĕн аслă залне çамрăксем вырнаçнă. Хăшĕсем хаçат-журналсем, кĕнекесем вулаççĕ, теприсем тата шашкăлла, доминолла выляççĕ. Радио илемлĕ юрăсем парать.

Сулахай енчи алăкран пĕр çамрăк кĕрет. Вăл савăнăçлă. Такамран вăтаннă пек, унăн икĕ питçăмарти хĕрелнĕ. Ăна часах 4—5 çамрăк карса илет.

— Ну, мĕнле? — ыйтаççĕ унран. Çамрăк ача ним калама аптăраса тăрать.

— Мĕн мĕнле? Сывă! Значит, годен! — тет вăл каярахпа.

— Полковник мĕн каларĕ?

— Вăл секрет вара. Кайран калăп,—ответлет çамрăк, йăл кулса.

Пĕрин хыççăн тепри кĕрсе тухаççĕ çамрăксем комиссине. Кашниченех пĕр сăмах — «годен» тени çеç илтĕнет. Вĕсем çине пăхатăн та, чун хĕпĕртесе каять: патмар, çирĕп сывлăхлă вĕсем, нихăшин çинче те салхулăх кураймăн.

Вĕсем — призывниксем, комиссине тăраççĕ. Вĕсем фронтра пулма мар, тупăсем кĕмсĕртетнине те илтмен-ха. Çапăçусем çинчен хаçатсенчен çеç пĕлеççĕ. Анчах кашниех пĕр ĕмĕт: хăвăртрах фронта каясси, фашистсене хирĕç çапăçăва кĕресси. Тăшманпа мĕнле кĕрешмеллине пĕлеççĕ вĕсем, кашниех çар ĕçне вĕреннĕ, чылайĕшĕсем тата, всевобуч подразделенийĕсенче вĕреннисĕр пуçне, спецподразделенисенчен вĕренсе тухнă.

Паян вĕсем тылра, хастарлă ĕçре. Тăван Хĕрлĕ Çар туса пыракан çĕнтерÿсем вĕсене татах та ытларах вăя хурса ĕçлеме хавхалантараççĕ.

— Эпĕ комплектовщик пулса ĕçлетĕп, — тет Саша Еремеев, пĕлтĕр çеç ФЗО шкулĕнчен вĕренсе тухнăскер. — Мĕнпур вăя лайăх тата нумайтарах продукци туса кăларнă çĕре паратăп. Паян кăнтăрлаччен сменăри нормăна тултартăм,—тет вăл.

Саша Порфирьев тата тухăçлăрах ĕçлет. Халĕ ĕнтĕ ăна цехра палламан рабочи çук. Унăн ячĕ яланах Хĕрлĕ хăма çинче. Задани илнĕ хыççăн вăл нихăçан та ăна пурнăçламасăр цехран тухса каймасть.

Нумаях та пулмасть Порфирьев юлташа пĕр заказ пачĕç. Ăна пурнăçлама сахалтан та 40 сехет кирлĕ пулнă. Çамрăк патриот вăхăта пĕр минута та сая ямасăр ĕçе хастарлăн тытăннă. Смена вĕçленнĕ. Анчах вăл киле кайма шутламан.

— Çакна туса пĕтермесĕр киле мар, çиме те тухмастăп, — тенĕ Порфирьев юлташ хăйĕн мастерне Афанасьев юлташа.

Вăхăт смена вĕçленнĕренпе 5 сехет иртнĕ. Комсомолец Саша Порфирьев хăйне панă заказа ăнăçлăн пурнăçлани çинчен мастера пĕлтернĕ.

— Маттур, пысăк тав сана куншăн! — тенĕ мастер, çамрăк патриотăн аллине чăмăртаса.

Костя Анисимов производствăна иртнĕ çулта пырса кĕнĕ. Вăл ФЗО шкулĕнче вĕренмен. Çавăнпа ĕçлеме пуçличчен унăн чылай вĕренмелле пулнă.

— Мĕнле профессие юрататăр?— ыйтнă унран цеха яриччен.

— Ăçта кирлĕ — çавăнта ĕçлĕп. Пур професси те маншăн пĕр пекех, — ответленĕ Анисимов.

Вăл столяр ĕçне вĕренме тытăннă. Пĕр уйăх çеç иртнĕ. Костя ĕçĕн технологи процесне вĕренсе çитнĕ, иккĕмĕш уйăхĕнче вара вăл норма тăрăх ĕçлесе, ăна 120—130 процент тултарма тытăннă.

Халĕ вăл фронтовой бригада членĕ; вăтамран илсен, вăл кашни кунах икшер норма, икĕ çын ĕçлемелли ĕçе туса пырать.

Анисимова халь рабочисем производствăра ĕçленипе кăна мар ытти енĕсемпе те лайăх пĕлеççĕ. Вăл обществăллă ĕçсене активлăн хутшăнать, цехра тухса тăракан «Стахановец» стена хаçачĕн редколлеги членĕ. Нумаях та пулмасть тата вăл спецподразделенинчен «хорошо» паллăпа вĕренсе тухрĕ.

Призывниксем хушшинче ялхуçалăхĕнчи стахановецсем те сахал мар. Вĕсенчен чылайĕшĕсен ашшĕсемпе пиччĕшĕсем фронтра. Колхозра вĕсем фронта кайнисен вырăнне йышăннă. Вĕсем хушшинче бригадирсем те, счетоводсем те, скотниксем те, трактористсем те пур.

18 çулхи Степан Козловăн ашшĕ çук, колхозра вăл пĕчченех ĕçлет, пиччĕшĕ Миша фронтра. Козлов иртнĕ çура конюхра пурăннă хушăрах уйхир ĕçне активлăн хутшăннă. Вăл тыра вырнă, кĕлте турттарнă, суха тунă. Ахальтен мар ĕнтĕ унăн ĕç кĕнеки çинче 300 ĕçкунĕ курăнать.

Козлов юлташ çапах хăй ĕçне çителĕклĕ тесе шутламасть.

— Фронт пирĕнтен ытларах пулăшу кĕтет. Пирĕн ăна çителĕклĕ таран аш-какай, сĕт-çу, çăкăр памалла. Мĕнпур ĕçе пирĕн фронтри пек туса пымалла. Хамăн ĕçе эпĕ çителĕклĕ теме пултараймастăп, манăн татах та ытларах ĕçлемелле, — тет Козлов юлташ.

Димитрий Морев, «Новая жизнь» колхоз членĕ, çуллахи вăхăтра колхозра 150 ĕçкунĕ тунă. Халь вăл электромонтер. Унăн икĕ пиччĕшĕ фронтра тăшмана хирĕç çапăçаççĕ, виççĕмĕш пиччĕшĕ фронтран анчах таврăнчĕ. Димитрий Морев та фронта кайма хатĕрленет. Çар ĕçне лайăх вĕренсе çитнĕ ĕнтĕ вăл, винтовкăран тÿрĕ перет, йĕлтĕрпе хытă ярăнать.

«Ударник» колхоз членĕсем Иван Васильев тата Пашковсем призыва çар специальноçĕ туяннипе кĕтсе илчĕç. Виççĕшĕ те нумаях пулмасть военкомат çумĕнче çар ĕçне вĕренчĕç. Ручной пулеметран, винтовкăран пеме тата граната ывăтма лайăх вĕренсе çитнĕ вĕсем.

Совет çамрăкĕсем тăван çĕршывпа фронта тĕрлĕ майсемпе пулăшма тăрăшаççĕ. Вĕсем фронтовиксем валли ăшă тумтирсем пухас, танксемпе самолетсем тума укçа пухас ĕçе активлăн хутшăннă.

Пĕр тĕслĕх. Тракторист Курочкин юлташ, иртнĕ çура тракторпа ĕçлемелли плана 150 процент ытла ирттерсе тултарнăскер, танксен «Тракторист Чувашии» колоннине тума 20 пин тенкĕ пачĕ.

— Тăван çĕршыв маншăн хаклă. Уншăн эпĕ хамăн вăя çеç мар, пурнăçа та пама хатĕр, — тет çамрăк патриот Федя Курочкин.

Совет çамрăкĕн халь пĕр шухăшпа пĕр ĕмĕт: тухăçлă ĕçпе, тар кăларса тунă укçа-тенкĕпе тăван Хĕрлĕ Çара çĕнтерÿ тума пулăшасси. Кирлĕ пулсан, вăл ыран тесен ыранах алла пăшал тытса тăшмана хирĕç татăклă çапăçăва кĕме хатĕр!

Х. ЛИСИН.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, промышленность пайĕн —3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 924 Типография №, Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2 Ф. 6, 58. 84 п.